24-мӗш çул тухать. Хакӗ 15 пус.

1941
ДЕКАБРЬ
30
ЫТЛАРИКУН
309(60 №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН
ХАÇАЧӖ.

Ялти комсомолецсен задачи

Çанталӑк лайӑххах пулайман тата вӑрçӑ йывӑрлӑхӗсем кансӗрлерӗç пулин те, 1941 çулта республикӑри колхозсем иртнӗ çултинчен пысӑкрах тупӑшлӑ тырпул туса илчӗç.

Иртнӗ хӗлле колхозниксемпе колхозницӑсем вӑйлӑ тырпул мастерӗсен опычӗсене тӑрӑшса вӗренчӗç, практикӑллӑ ӗçре вӑл опытсемпе сарлакан усӑ курчӗç. Агротехникӑна вӗрентес тӗлӗшпе комсомолӑн колхозсенчи пуçламӗш организацийӗсем те чылай ӗçлерӗç. Нумай çӗрте агротехникӑна вӗренме ятарласах кружоксем организациленӗччӗ. Колхозсем хӗлле удобренисем çителӗклӗ хатӗрлерӗç, çураки вӑхӑтӗнче акма вӑрлӑхсене пӗрчӗн-пӗрчӗн суйласа тасатрӗç, уйра юр тытса хӑварчӗç. Малта пыракан колхозсем çуракине те кӗске срокра, пысӑк пахалӑхпа ирттерчӗç. Вӗсем чи паха сортлӑ, таса вӑрлӑхсене машинӑпа акса хӑварчӗç. Калчасене тӗрлӗрен удобренисемпе апат парса тӑчӗç, çу вӑхӑтӗнче çумкурӑксене çумларӗç. Ӑнса пулнӑ тырпула тӑккаламасӑр пуçтарса кӗртрӗç. Бригадӑсемпе звеносем кашни пучахшӑн, кашни пӗрчӗшӗн кӗрешрӗç. Отечественнӑй аслӑ вӑрçӑ 1942 çулта ялхуçалӑх умне пысӑкрах та ответлӑрах задачӑсем кӑларса тӑратать. Фронтпа тӑван çӗршыва валли ытларах тырпул, аш-какай кирлӗ. 1942 çулта пирӗн уйхирсенче çӗнӗ культурӑсем çитӗнтермелле. Вӑл шутран йӗтӗн-кантӑр, махорка тата кок-сагыз нумай вырӑн йышӑнаççӗ. 1942 çулта пирӗн колхозсен темиçе хут ытларах кӗртырри акса хӑвармалла, 35 пин гектар çинче çӗрулми туса илмелле.

Вӑйлӑ тырпул туса илес тесен, хатӗрленӳ ӗçне халех тытӑнмалла. Çитес çулти тырпул тухӑçлӑхӗ хӗлле мӗнле ӗçленинчен те килет. Ахаль мар ваттисем урапана хӗлле, çунана çулла хатӗрлеме хушнӑ.

Хатӗрленӳ ӗçне тӑвас тӗлӗшпе ялти комсомолецсемпе çамрӑксен çине тӑрса ӗçлемелле. Комсомол организацийӗсем колхозсенче пысӑк вӑй пулса тӑраççӗ, вӗсем колхозсенче чылай чухне ертсе пыма тивӗçлӗ.

Вӑйлӑ тырпул туса илессин тӗп условийӗ çителӗклӗ таран тата лайӑх, паха сортлӑ вӑрлӑх акса хӑварни пулать. Халь çав вӑрлӑхлӑх тырра уйӑрса, сортласа, тӗплӗ çӗре хумалла, ӑна хаклӑран та хаклӑ япала пек сыхламалла. Уйрӑмӑнах кӑçал çӗрулмине лайӑх сыхласа усрамалла, мӗншӗн тесен кӗркунне нӳрӗ пулчӗ, çавӑнпа вӑл çӗрме пултарать. Анчах пирӗн республикӑри хӑшпӗр районсенче вӑрлӑх хатӗрлес, ӑна сортлас тӗлӗшпе ӗç начартарах тӑрать-ха. Комсомолӑн ялти организацисен хӑвӑртрах авӑн çапса пӗтерес тӗлӗшпе ырми-канми ӗçлемелле, çамрӑксене ертсе пымалла. Анчах тепӗр чухне пирӗн комсомолецсем çамрӑксемпе пӗрле уйра е фермӑра ӗçлес вырӑнне канцелярисенче вӑхӑта ирттерме юратаççӗ. Комсомолец-колхозникӑн вырӑнӗ канцеляринче мар, бригадӑсемпе звеносенче! Вӗсем колхоз производствинче пысӑк тухӑçлӑхпа ӗçлесе, çамрӑксене пример кӑтартса ертсе пырсан тин ялхуçалӑх ӗçӗсене хӑвӑртрах туса ирттерме пулать. Çамрӑксем авӑна кунӗн-çӗрӗн машинӑпа е алӑпа çапас ӗçе йӗркелеме тивӗçлӗ. Вӑрлӑхлӑх тырра сортласа хурас енӗпе те вӗсен ӗçлес пулать. Хӑшпӗр культурӑсене акмалли çӗр лаптӑкӗ сарӑлнӑ пирки, колхозра сортлӑ вӑрлӑх çитнипе çитменнине тӗрӗслемелле, ытти колхозсемпе улӑштарас ӗçе организацилемелле.

Вӑрлӑх кӑна тупса хунипе çуракине хатӗрленес ӗç пӗтмест-ха. Тракторсене т. ыт. ялхуçалӑх машинисене вӑхӑтра юсамалла. Кӑçал мастерскойсене машинӑсен çӗнӗ чӑсӗсене илсе килеймеççӗ. Çавӑнпа, Сталинград облаçӗнчи Красноармейски МТС-ри комсомолецсенчен пример илсе, çамрӑксен кивӗ чӑсçене юсас ӗçе тытӑнмалла. Вӗсем кивелнӗ подшипнике е цилиндра çеç мар, кашни пӗчӗк гайкӑна пуçтарса трактор çинче усӑ кураççӗ. Комсомолецсем ытларах хӑйсен пуçарулӑхне кӑтартса, тӑрӑшса ӗçлесен, ялхуçалӑх машинисене юсас ӗçе те вӑхӑтра туса пӗтерме пулать. Ку тӗлӗшпе Алтай крайӗнчи комсомолецсем пысӑк ӗç тунӑ. Вӗсем ялхуçалӑх машинисемпе инвентарьсене тӗрӗслес тата юсас тӗлӗшпе икӗрнелӗх туса ирттернӗ. Çав икӗрнелӗх колхоз правленисене пулӑшас ӗçе темиçе пин çамрӑка явӑçтарма пулӑшнӑ.

Декабрӗн 25-мӗшӗнчен пуçласа пӗтӗм Совет Союзӗпе машинӑсемпе инвентарьсене тӗрӗслес тата юсас тӗлӗшпе комсомолецсен уйӑхлӑхӗ пулса иртет. Комсомол халиччен ирттернӗ мероприятисенчи пекех, ку уйӑхлӑхра та пирӗн республикӑри çамрӑксем активлӑн хутшӑнса ӗçлӗç.

Вӑйлӑ тырпул туса илес пулсан, уя ытларах удобрени кӑлармалла. Колхозсенче выльӑх витисен умӗнче тислӗк нумай пухӑнать. Халь вӗсене пуçтарса уя илсе тухса лайӑх купаласа хумалла. Кӗл тата ытти удобренисене темиçе тонна пухма пулать. Ку ӗçре иртнӗ çулсенчи пекех, комсомолецсене çамрӑксем, пионерсемпе шкул ачисем пулӑшма пултараççӗ.

ВКП(б) Обкомӗпе Чӑваш АССР Совнаркомӗ хушнипе пӗлтӗр нумай колхозсенче уя юр тытса хӑварма щитсем тунӑччӗ. Вӗсемпе кӑçал та усӑ курас пулать. Унсӑр пуçне çапасем, улӑм кӗлтисем тӑратса тухмалла, купасем тумалла. Юр тытса хӑварас ӗçе хакламасӑр тӑма юрамасть. Малта пыракансен опычӗ кӑтартнӑ тӑрӑх, ку мероприятие туса ирттерни тырпул тухӑçне ӳстерме пулӑшать.

Кӑçал туртӑм вӑйӗпе усӑ курасси çинчен те тӗплӗн шухӑшласа пӑхма лекет. Урапа тата ытти хатӗрсене халех юсаса хатӗрлемелле. Лаша вӑйӗ çителӗксӗр пек туйӑнать пулсан, турттарас ӗçе вӑкӑрсемпе ӗнесене кӳлме вӗрентме тытӑнмалла.

Кашни колхозрах сеялка, плуг, сӳре тата ытти ялхуçалӑх машинисем сахал мар. Анчах хӑшпӗр çӗрте çав машинӑсене хӳтӗ çӗре илсе кӗрсе тирпейлесе лартас ӗçре хуçасӑрлӑх пуçпулса тӑрать. Тепӗр чухне плугсем уйрах хӗл каçаççӗ. Çавӑн пек япаласене комсомолӑн куçӗ курмалла, çитменлӗхсене пӗтермелле.

Комсомол организацийӗсен умӗнче колхозсемпе МТС-сем валли квалификациллӗ кадрсем хатӗрлес ӗçре пулӑшас задача тӑрать. Хӗрлӗ Çара кайнӑ тимӗрçӗсен, трактористсен, комбайнерсен вырӑнне хӗрсене хатӗрлемелле. Кружоксенче, трактор отрячӗсенче, мастерскойсенче пиншер работница вӗрентсе кӑларма пулать. Пӗтӗм ӗç организаторсенчен-комсомолецсенчен килет. Кашни опытлӑ тракторист учитель пултӑр, ун патӗнче пӗрре е икӗ хӗр вӗрентӗр. Республикӑри хӑшпӗр районсенче ку ӗçе тытӑннӑ. Улатӑр районӗнче 30 хӗр, Тӑвайӗнче 20 хӗр, Канашри механизаторсен шкулӗнче 70 хӗр трактористка, 30 хӗр комбайнерка пулма вӗренеççӗ. Калинински районра Кӑкшӑм ялсоветӗнче курс организацилесе 27 çынна вӗрентсе кӑларнӑ.

Çитес çул вӑйлӑ тырпул туса илес тӗлӗшпе комсомолӑн колхозсенчи пуçламӗш организацийӗсем пӗр-пӗринпе ӑмӑртса ӗçлемелле. Çӳлтен кӑтартусем кӗтмесӗрех хӑйсен ытларах пуçарса пымалла. Çуракине хатӗрленес тӗлӗшпе комсомолӑн колхозсенчи организацийӗсен конкретнӑй план пулмалла. Ӑна пурнӑçлама ялти пӗтӗм çамрӑка явӑçтармалла. Çуракине лайӑх хатӗрленни фронта пулӑшни пулать.

И. В. Сталин тата В. М. Молотов Мускавра господин Иденпа калаçусем туса ирттерни çинчен Англипе Совет Союзӗн правительствисем кӑларнӑ КОММЮНИКЕ

1941 çулти декабрӗн иккӗмӗш пайӗнче Мускавра, пӗр енчен, ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ **И. В. Сталин** тата Ютçӗршыв Ӗçӗсен Халӑх Комиссарӗ **В. М. Молотов** тата, тепӗр енчен, Великобританин Ютçӗршыв ӗçӗсен министрӗ **Антони Иден** хушшинче калаçусем пулса иртнӗ. Çак калаçусенче вӑрçӑ ӗçӗсене мӗнле туса пырасси тӗлӗшпе тата вӑрçӑ хыççӑн Европӑра мирпе сыхлӑха организацилесси тӗлӗшпе хӑйсен шухӑшӗсене пӗр-пӗрне тӗплӗн каласа панӑ. Çак калаçусенче ССР Союзӗн Великобританири посолӗ **И. М. Майский** тата Британин ССР Союзӗнчи посолӗ **Стаффорд Криппс** пулнӑ. Вӗсемсӗр пуçне, хӑшпӗр заседанисене Великобританин Ютçӗршыв ӗçӗсен министрӗн яланхи юлташӗ **Александр Кадоган** тата Великобританин имперски генштаб начальникӗн заместителӗ генерал-лейтенант **Ней** хутшӑннӑ.

Туслӑ, пӗр-пӗрне ӑнланса пулса иртнӗ калаçусем вӑрçӑ ӗçӗсене мӗнле туса пырас, уйрӑмах гитлерла Германие пӗтӗмпех аркатса тӑкас тата çакӑн хыççӑн Германие çӗнӗ агрессисем тума пачах та памалла мар мерӑсем йышӑнас тӗлӗшпе икӗ енӗ те пӗр пек шутланине кӑтартса çирӗплетрӗç. Вӑрçӑ хыççӑн мирпе сыхлӑха мӗнле организацилес ыйтусем тӗлӗшпе хӑйсен лухӑмӗсене пӗр-пӗрне каласа пани паха та усӑллӑ материалсем нумай пачӗ. Çак материалсем ӗнтӗ ку тӗлӗшпе малашне конкретнӑй предложенисем туса хатӗрлессине çӑмӑллатрӗç.

Икӗ енӗ те Мускавра пулса иртнӗ калаçусем ССР Союзӗпе Великобританин пӗр-пӗринпе татах та таччӑнрах çыхӑнас тӗлӗшпе малалла тунӑ паха та çӗнӗ утӑм пулнине шанса тӑраççӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Декабрӗн 28-мӗшӗнчи каçхи пӗлтерӳ

Декабрӗн 28-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем противника хирӗç пур фронтсенче те çапӑçнӑ. Фронтӑн чылай участокӗсенче пирӗн войскӑсем, противника хирӗç çапӑçса, малалла куçса пынӑ тата халӑх пурӑнакан чылай пунктсене йышӑнса илнӗ.

Декабрӗн 27-мӗшӗнче нимӗçсен 8 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн 3 самолет пӗтнӗ.

Декабрӗн 28-мӗшӗнче Мускав патӗнче нимӗçсенне 4 самолет персе антарнӑ.

* * *

Декабрӗн 27-мӗшӗнче пирӗн авиаци нимӗçсенне 45 танк, 8 бронемашина, войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 620 автомашина, 17 полевой оруди прислугипе пӗрлех, 9 зенитнӑй точка, боеприпассем турттарса пыракан 430 лав ытла, горючисем тултарнӑ 3 автоцистерна, виçӗ радиостанци пӗтерсе тӑкнӑ, чугунçул çинчи 4 эшелона çунтарса янӑ тата противникӑн пехотине 5 батальона çити сапаласа янӑ.

* * *

Кӑнтӑр-Хӗвеланӑç фронтӗнчи участоксенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн чаçсем, противника хирӗç пӗр кун хушши çапӑçса, нимӗçсене халӑх пурӑнакан 24 пунктран хӗссе кӑларнӑ тата тӑшманӑн 8 танкне, 4 бронемашинине, 4 орудине пӗтерсе тӑкнӑ, противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 2000 çынна çити вӗлерсе пӗтернӗ. Тӑшманӑн 2 танкне, 10 автомашинине тата боеприпассем нумай тытса илнӗ. Фронтӑн тепӗр участокӗнче пирӗн боецсем халӑх пурӑнакан 9 пункта нимӗçсенчен ирӗке кӑларнӑ.

* * *

Тим хулине йышӑнса илнӗ чухне пирӗн боецсем нимӗçсенне 40 оруди, 36 пулемет, 130 автомашина, çар пурлӑхӗсене турттарса пыракан лавсене нумай тытса илнӗ тата тӑшманӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 1000 çынран ытла вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Кӗçӗн лейтенант Бельчик юлташ командир пулса ертсе пыракан разведчиксен группи противник тылне кӗрсе кайса, В. ялӗнчи çуртсенчен пӗринче 10 нимӗçе тупнӑ та вӗсене пурне те вӗлерсе пӗтернӗ. Каялла таврӑннӑ чухне хӑюллӑ разведчиксем тӑшманӑн 40 салтакне тӗл пулнӑ. Пирӗн боецсем противник çине сасартӑк пырса тапӑнса, нимӗçсене пӗр çын юлмиччен вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Юлашки кунсенче Кӑнтӑр фронтӗнче Итали салтакӗсемпе офицерӗсем хӑйсен ирӗкӗпе тыткӑна парӑннисем час-часах пулаççӗ. Декабрӗн 27-мӗшӗнче пирӗн командирсенчен пӗрне 44 итальянец хӑйсен ирӗкӗпе парӑннӑ. Çав кунах чернорубашечниксен легионӗнчи 79-мӗш батальонӑн командирӗ капитан Монголи Релальдо, икӗ офицерпа тата 20 салтакпа пӗрле, хӑйсен ирӗкӗпе пирӗннисен енне каçнӑ. Итальянецсем 8 йывӑр пулемет, 8 çӑмӑл пулемет, 5 миномет тата танксене хирӗç пемелли 2 оруди юсавлӑнах панӑ.

* * *

Р. юлташ командир пулса ертсе пынипе Мускав облаçӗн нимӗçсем оккупациленӗ районӗсенчен пӗринче çапӑçакан партизансен отрячӗ гитлерла захватчиксене пӗр шеллемесӗр пӗтерсе пырать. Темиçе кун хушшинчех партизансем нимӗçсен 3 автобусне, 2 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ тата фашистсен салтакӗсемпе офицерӗсене 85 çынна вӗлерсе пӗтернӗ. Нумаях пулмасть нимӗçсен грузовой автомашини çул тӑрӑх пынине партизансен группи тӗл пулнӑ. Совет патриочӗсем машина çинче ларса пыракан нимӗçсене вӗлерсе пӗтернӗ, патронсем тултарнӑ 2 ещӗке тытса илнӗ, машинине пӗтерсе тӑкнӑ. Ф. юлташӑн отрядӗнчи 5 партизан противник колонни çине хӑюллӑн пырса тапӑннӑ. Вӗсем зенитка лартнӑ автомашинӑна, танка хирӗç пемелли туппа, автомашинӑсене чылай пӗтерсе тӑкнӑ тата нимӗçсене 10 çынна ытла вӗлерсе пӗтернӗ.

Тыткӑна лекнӗ унтер-офицер, нимӗçсен 45-мӗш дивизин лазаретӗнчи санитар **Иозев Фейхтикдер** допросра çапла каланӑ: «Пирӗн дивизи пысӑк çухатусем тӳсрӗ. Вилнӗ салтаксемпе офицерсен хисепӗ 5.000 çынна çитет. Пирӗн лазаретра аманнисем кӑна 2.100 çынна çитеççӗ. Кунсӑр пуçне тата чаçсенче чирлӗ салтаксемпе тӑм илнинчен пӑсӑлнисем питех те нумай. Пӗр эрне каярах çеç партизансемпе çапӑçнӑ çӗрте аманнӑ салтаксен группине лазарета илсе пычӗç».

* * *

Отечественнӑй вӑрçӑ пуçланнӑ кунранпа Махач-Кала хулинчи изобретательсен хисепӗ икӗ хут ӳснӗ. Хулари 15 предприятире кӑна рационализаторла сӗнӳсене 400 яхӑн пурнӑçа кӗртнӗ, вӗсене пурнӑçланинчен çӗршер пин тенкӗ укçа перекетленет. Механически заводри мастер **Дрепин** юлташ детальсене тумалли станок шухӑшласа кӑларнӑ, вӑл ӗç тухӑçлӑхне темиçе хут ытларах ӳстернӗ.

Декабрӗн 29-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Декабрӗн 29-мӗш ыран тенӗ чух çӗрле пирӗн войскӑсем пур фронтсенче те противника хирӗç çапӑçнӑ.

* * *

Хӗвеланӑç фронтӗнчи участоксенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн танковӑй часть икӗ кун хушшинчи çапӑçусенче противника халӑх пурӑнакан 18 пунктран хӗссе кӑларнӑ. Çакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: 30 танк, 250 автомашина, 15 оруди, 7 пулемет. Фронтӑн тепӗр участокӗнче Сильченко командирӑн подразделенийӗ Р. ялӗшӗн пулса иртнӗ çапӑçусенче противникӑн пилӗк атакине сирсе янӑ. Унтан пирӗн боецсем контратака туса нимӗçсен пехотин икӗ ротине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Ленинград фронтӗнчи участоксенчен пӗринче пирӗн боецсем нимӗçсенне 5.450 снаряд, 702 граната, 2 миномет тата вӗçсе хӑпарма хатӗрленнӗ самолет тытса илнӗ, противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 400 çынна вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Кӑнтӑр фронтӗнче кӗрешекен пирӗн летчиксем пӗр кун хушшинчи çапӑçусенче противникӑнне 42 грузовой тата 2 легковой автомашина, 8 танк, 10 полевой оруди, 7 зенитнӑй оруди, 1 зенитнӑй пулемет, тӗрлӗ груз тиенӗ 70 яхӑн лав пӗтерсе тӑкнӑ тата нимӗçсен пехотине 1000 çынна яхӑн вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Аванесов красноармеец К. хули патӗнче çапӑçнӑ чухне нимӗçсен противотанковӑй орудин расчетне гранатӑпа пӗтерсе тӑкнӑ, автоматран персе, тӑшманӑн 18 салтакне вӗлерсе пӗтернӗ, нимӗç батальонӗн штабне çӗмӗрсе кӗрсе, фашистсен офицерне персе пӑрахнӑ. Пӗр çапӑçурах Аванесов юлташ 23 нимӗç захватчикне вӗлерсе пӗтерсе, противник çинчен паха сведенисем, икӗ офицер сумкине тата пилӗк автоматне хамӑрӑн командованине илсе пырса панӑ.

* * *

Нумаях та пулмасть СС «Империя» текен дивизин зенитнӑй дивизионӗнчи 3-мӗш батарейӑран тыткӑна лекнӗ ефрейтор Курт Фаль çапла каласа панӑ: «Вӑрçӑ пуçланнӑ чухне пирӗн дивизире 14 пин çын пулнӑ. Ӑна виçӗ хутчен тултарса, ун çумне татах 7.500 çын хушрӗç. Мускав патӗнчен чакма пуçланӑ вӑхӑтра ротӑсенче 20—25-шер çынран, дивизире 3000 çынран ытла юлман. Çапла ӗнтӗ «Империя» дивизийӗнче вӑрçӑ пуçланнӑранпа вилсе, аманса тата нимӗн хыпарсӑр çухалса салтаксемпе офицерсем 18.000 çын пӗтнӗ. Халран кайнӑ пирки тата пирӗн çарӑн хавхаланӑвӗ чакнӑ пирки эпир вырӑссен контрнаступленине тытса чарма пултараймарӑмӑр. Вӑрçӑ йӑлӑхтарса çитерчӗ, салтаксем пурте килӗсене таврӑнасшӑн. Эпир чакма тытӑниччен çарти дисциплина чылаях япӑхланчӗ, чакнӑ вӑхӑтра ниепле йӗрке тавраш те пулмарӗ. Никам та никама та итлемерӗ. Офицерсенчен нумайӑшӗ хӑйсем машинӑсемпе тарчӗç. Салтаксем хушшинче паника пуçланса кайрӗ. Эпир машинӑсене пӗтӗмпе пекех пӑрахса хӑвартӑмӑр. Салтаксен пӗр пайӗ пӑшалӗсене те пӑраха-пӑраха хӑварчӗç. Тӑм илнипе аптранисем тата аманнисем хӑйсене пӗрле илсе кайма йӑлӑнчӗç, анчах вӗсем çине çаврӑнса пӑхакан никам та пулмарӗ. Пирӗн командовани эпир стратеги тӗллевӗпе чакса пыратпӑр тесе ӗнентерет. Анчах салтаксем нумайӑшӗ стратеги тӗллевӗпе чакнӑ чухне машинӑсене, орудисемпе çынсене пӑрахса хӑварас çуккине ӑнланаççӗ».

* * *

Аяларахра эпир Мускав облаçӗнчи Ново-Петровка районӗнчи Покровское ялӗнче нимӗçсен фашистла тискер кайӑкӗсем мӗнле тискер те ирсӗр ӗçсем туни çинчен çырнӑ акта пичетлетпӗр:

«АКТ

Ноябрӗн 25-мӗшӗнче нимӗçсем Покровское ялне çӗмӗрсе кӗчӗç, инвалидсен 26-мӗш №-лӗ çуртӗн мӗнпур хуçалӑхне çаратса пушатса хӑварчӗç. Фашистсем мӗнпур продовольствие, çӗрулми, çу тата тырпул запасӗсене пӗтӗмпех илсе тухса кайрӗç, хурт вӗллисене çӗмӗрсе пӗтерчӗç, инвалидсене выçӑ тӑратса хӑварчӗç. Покровское ялӗнче нимӗçсем икӗ эрне хушши хуçаланчӗç. Çак вӑхӑт хушшинче инвалидсен çуртӗнче пурӑнакан 500 çынран 250-шӗ выçӑпа вилчӗç. 17 çулхи Николай Мороз тата Григорий Тарасов инвалидсене фашистсем вӗлерчӗç. Андрей Ненасатина фашистсем вутӑ çурма килӗшменшӗн пуртӑпа касса вӗлерчӗç. Сергей Никитинӑн пуçне прикладпа çапса лапчӑтрӗç. Нимӗçсен фашистла тискер кайӑкӗсем хӑйсем тӗллӗн çӳреме пултарайман пур инвалидсене те урама кӑларса ывӑтрӗç. Вӗсем пурте шӑнса вилчӗç.

Çак акт çине инвалидсем алӑ пуснӑ: **Бойко Михаил, Гурко Алексей, Кулешев Алексей, Рябов Петр, Зуев Алексей**»

Фронт интересӗсемшӗн

ЕТӖРНЕ. Сталин ячӗпе тӑракан артель васкавлӑ заказ илнӗ. Çав заказа пурнӑçлама артель членӗсем мӗнпур вӑя хурса ӗçлеççӗ. А. Борисова, В. Абрамова, А. Аникина, Ефимова тата ытти юлташсем сменӑри нормӑна 200 процент, уйрӑм кунсенче 230—250 процент таран тултарса ӗçлеççӗ. Çакнашкал хӑвӑртлӑхпа ӗçлесе, артель çулталӑк планне 150 процент пурнӑçларӗ.

Декабрӗн 16-мӗшӗнче, Мускав çывӑхӗнчи вырӑнсенче пирӗн Хӗрлӗ Çар нимӗçсене çапса çӗмӗрнӗ ятпа, артельре митинг пулса иртрӗ. Митингра производство заведующийӗ Страхова юлташ сӑмах тухса каланӑ хыççӑн артель членӗсем ӗç хӑвӑртлӑхне татах та ӳстерме обязательство илчӗç. Унтах Хӗрлӗ Çар боецӗсем валли çӗнӗ çул ячӗпе парнесем пухса яма пулчӗç, укçа-тенкӗпе япала лотерейин билечӗсене 2100 тенкӗлӗх илме çырӑнчӗç, 1500 тенкӗ укçине унтах пухрӗç.

Çавӑн пекех районри медицина работникӗсем те, Сталин юлташ Октябрь уявӗ кунӗсенче каланӑ сӑмахсемпе хавхаланса, фронт интересӗсемшӗн кунӗн-çӗрӗн ӗçлеççӗ. Хирурги лечебницин врачӗ Тимошенко юлташ, лечебницӑра рабочисем çителӗклӗ мар пулсан та, пур ӗçе те вӑхӑтра туса пыма ӗлкӗрет.

Спирт тӑвакан заводри рабочисем, инженерсемпе техниксем тата служащисем тӑван çӗршыва ытларах продукци туса парассишӗн пӗтӗм вӑйпа ӗçлеççӗ. Комсомолец Ладур ертсе пыракан цехра пурӗ 22 çын ӗçлеççӗ. Вӗсем пурте стахановецсем. Сталин юлташ фронта ытларах продукци парса тӑма чӗнсе калани çине завод коллективӗ ӗçпе ответлет. Кастеркин, Волков, Ротман, Шигин слесарьсем цехран тухмасӑр 16-шар сехет ӗçлеççӗ. Лебедев юлташ кунне 17—18 шар сехет ӗçлесе, ӗç нормине 230—250 процент таран тултарса пычӗ. Халӗ вӑл тӑшмана хирӗç çавӑн пекех хастарлӑн çапӑçма фронта тухса кайрӗ.

— Юлташсем, вӑйӑрсене пӗр шеллемесӗр тӑрӑшса ӗçлӗр. Çӗршыв валли, фронт валли ытларах та ытларах продукци туса кӑларӑр. Эпӗ тӑшмана хирӗç юлашки тумлам юн юлмиччен, хамӑн пурнӑçа шеллемесӗр çапӑçма пулатӑп, — терӗ вӑл фронта тухса кайнӑ чух цехри рабочисене.

Механически цехри рабочисем темиçе çул хушши ӗçлемесӗр ларнӑ водокачкӑна ӗçе ячӗç.

Чӑваш АССР Верховный Совет депутачӗ К. Якимова юлташ ертсе пыракан смена кулленхи нормӑна 150 процент тултарса пырать. Вутӑ татакан рабочисем те хастарлӑн ӗçлеççӗ. Вӗсен план тӑрӑх кунне 10 кубометр вутӑ татса сурмалла пулсан, вӗсем 27 кубометр татса çураççӗ.

Хазов юлташ хӑй ертсе пыракан цех фронта пулӑшас тӗлӗшпе мӗн туни çинчен çапла каласа пачӗ:

— Пирӗн рабочисем Пӗтӗм Союзри çамрӑксемпе комсомолецсен воскресникӗсенче 3 хут пулчӗç, 4 пин тенкӗлӗх ӗçлерӗç. Çав укçана пӗтӗмпех оборона фондне хыврӑмӑр. Кунсӑр пуçне кашни уйӑхрах ӗçукçинчен 1570 тенкӗ оборона фондне парса тӑратпӑр, — терӗ вӑл.

В. ЛАЗАРЕВ.

Çӗнӗ çул ячӗпе фронтовиксем патне парнесем яраççӗ

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводри рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем хушшинче боецсем валли çӗнӗ çул парнисем яма укçа-тенкӗ пухас ӗç анлӑн сарӑлчӗ.

Декабрӗн 28-мӗш тӗлне пурӗ 3 пин тенкӗ ытла пухӑннӑ. Вӑл шутран вагонсем тӑвакан цехра ӗçлекенсем 650 тенкӗ, йывӑççем касакан цехрисем — 300 тенкӗ укçа панӑ. Стахановец бригадир Дохленко юлташ парнесем илме 100 тенкӗ панӑ. Пухӑннӑ укçапа çимелли, тӑхӑнмалли, супӑнь, бритва, хут, карандаш, шӑл тасатмалли порошокпа щетка тата ытти япаласем туяннӑ. Парнесене 20 ещӗке хурса Калинин енче çапӑçакан боецсем патне янӑ. Халӗ тата 20 ещӗк яма хатӗрленеççӗ.

Трансторгпитӑн Канаш отделенийӗнче ӗçлекенсем те тӑван çӗршыва паттӑррӑн сыхлакансем патне çӗнӗ çул ячӗпе парнесем яма 762 тенкӗ укçа пухнӑ. Çав укçапа 20 мӑшӑр чӑлха, 8 сӑмса тутри, 30 катӑк супӑнь, 5 кило çу тата ытти япаласем те илсе янӑ.

Т. ИВАНОВ.

Йӗлтӗрçӗсен команди

ИШЛЕЙ. Райцентрта патвар комсомолецсемпе союзра тӑман çамрӑксенчен йӗлтӗрçӗсен командине организациленӗ. Декабрӗн 14-мӗшӗнче команда занятисем ирттерме тытӑнчӗ. Командӑна Райкомолри учет ӗçӗсен заведующийӗ А. Михайлов юлташ ертсе пырать. Унта пурӗ 15 çын, вӗсенчен виççӗшӗ союзра тӑман çамрӑксем. Вӗсем пурте учебнӑй пунктсенче çар ӗçне вӗренсе тухнӑ.

Занятисем йӗркеллӗ, эрнере 3 хутчен пулаççӗ. Халиччен 6 заняти пулнӑ, 31 сехет хушши вӗреннӗ. Икӗ хутчен каçсенче 10 километр хушши йӗлтӗрпе похода кайса килнӗ. Ку поход вӗсене сӑртсенчен анса хӑпарма тата ытти йывӑрлӑхсене çӗнтермешкӗн хӑнӑхма пулӑшать.

А. Ландышев, А. Петухов, П. Мовин, Г. Разумов тата А. Прокопьев çамрӑксем—командӑри хастарлӑ комсомолецсем. Вӗсем йӗлтӗрпе хӑвӑрт тата пысӑк ӑсталӑхпа çӳреççӗ.

Йӗлтӗрпе çӳреме вӗренсе çитнӗ хыççӑн командӑри боецсем программа тӑрӑх йӗлтӗрсем çинче винтовкӑран пеме, граната ывӑтма, штыксемпе çапӑçма вӗренме пуçлаççӗ.

Çамрӑк патриотсем 60 сехетлӗ программӑна 1942 çулти январӗн 10-мӗшне вӗренсе пӗтерме, малтанхи занятисенчен пуçласа вӗренсе пӗтериччenех çирӗп дисциплинӑллӑ пулма сӑмах панӑ. Вӗсем кӗске срокрах вӗренсе пӗтерсе, тӑван çӗршыва сыхлама фронта кайма хатӗрленсе çитме тӑрӑшаççӗ.

Комсомолецсен хастарлӑхне курса, ялти ытти çамрӑксем те хӑйсене çак командӑна вӗренме илме ыйтаççӗ. Вӗсем те, фашистла захватчиксене пӗтӗм курайманлӑхпа ылханса, вӗсене хирӗç кӗрешмешкӗн фронта кайма хатӗрленсе çитесшӗн.

З. МИТРОФАНОВА.

Çителӗклӗ хатӗрленмен

Канаш районӗнчи вӑрман промышленность предприятисем вӑрман хатӗрлесе турттармалли плана пурнӑçлаймарӗç. Декабрӗн 20-мӗш тӗлне Канаш вӑрманпромхозӗ вӑрман хатӗрлевӗн çулталӑк планне тултарман. Канаш вӑрманпромхозне кӗрекен Шӑхран вӑрманпункчӗпе Сиккасси вӑрманпункчӗсем уйрӑмах япӑх ӗçлеççӗ.

Вӑрман хатӗрлев планне тултарса пыманнин тӗп сӑлтавӗ колхозсем вӑрман хатӗрлев ӗçне çителӗклӗ вӑй парса тӑманнинчен те килет. Вӑрманпромхозӑн хӑйӗн транспорт çук. Çавӑнпа та колхозсем вӑрман хатӗрлевӗнче хӑйсен обязательствине пурнӑçлани пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать.

Декабрӗн 1-мӗшӗнче вӑрман хатӗрлевӗнче çуран е лашапа ӗçлемелли тӳлевлӗ повинность пуçланчӗ. Анчах хӑшпӗр ялсоветсемпе колхозсем халӗ те вӑрман хатӗрлев ӗçне çителӗклӗ вӑй уйӑрса памаççӗ-ха.

Калинин ячӗпе тӑракан колхоз, «Хунав», «Новая жизнь», «Вторая пятилетка», «Канаш» колхозсем вӑрман хатӗрлев ӗçне пӗр çын та яман.

Вӑрман хатӗрлес ӗçри рабочисене тухӑçлӑ ӗçлеме кирлӗ условисем туса памалла. Ку тӗлӗшпе Канаш районӗнчи вӑрманпромхозӗнче чылай çитменлӗхсем пур.

Пысӑк пахалӑхлӑ инструментсем çителӗклӗ мар, лаша кӳлмелли хатӗрсем юсавлӑ мар.

Стахановла движение куллен ертсе пыни çук. Çавна пула лайӑх ӗçлекен рабочисен опычӗсемпе юлса пыракан рабочисене паллаштарас ӗçе йӗркелемен, вӑрманта ӗçлекенсем хушшинче стахановла шкулсем те организацилемен.

Леспродторг хӑйӗн ӗçне урӑхлатса çӗнетмен. Вӑрманта ӗçлекенсем валли вӗретнӗ шыв çителӗклӗ мар, столовӑйсене те лайӑх йӗркелемен.

Канаш вӑрманпромхозӗ çакнашкал япӑх ӗçленине чӑтма çук. Çак çитменлӗхсене халех пӗтерсе, вӑрман хатӗрлес ӗçе вӑрçӑ вӑхӑтне тивӗçлӗ пек урӑхлатса çӗнетмелле. Районри организацисен вӑрманпромхоза çителӗклӗ ӗç вӑйӗ парса тӑма тӑрӑшмалла.

Чапаев ячӗпе тӑракан тата «Комсомол» колхозсем вӑрман хатӗрлев ӗçне пӗлсе, лайӑх организациленипе иттисене пример кӑтартаççӗ. Вӗсем вӑрман хатӗрлевне кирлӗ чухлӗ ӗç вӑйӗ, лашасем çителӗклӗ панӑ. Декабрь уйӑхӗнчи плана ытлашшипех пурнӑçлама тӑрӑшса ӗçлеççӗ. Районри ытти колхозсен вӗсенчен пример илмелле.

Вӑрман касакан колхозник Ива Константиновӑн ӗçри стахановла меслечӗсемпе пур рабочисене те паллаштармалла. Вӑл уйӑхра 40 норма ытла тултарса ӗçлет. Çавӑн пекех Макаро Захаров двухсотниксем те примерлӑ ӗçлеççӗ.

Вӑрçӑ вӑхӑтӗнчи условисенче вӑрман промышленноçӗ юлса пыни пулмалла мар. Государствӑн вӑрман хатӗрлев планне ытлашшипех пурнӑçламалла.

П. СЕРГЕЕВ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

Филиппин утравĕсем çинче, уйрăмăнах Лусон утравĕн çурçĕрти пайĕнче, танксем хутшăннипе хаяр çапăçусем пыраççĕ. Япони войскисем наступлени туса пыраççĕ, Манила хулишĕн хăрушлăх ӳсет. Çакна пула Филиппин правительстви, Америкăн верховнăй комиссарĕн резиденцийĕ тата пĕтĕм çар учрежденийĕсем пурте Манилăран куçса кайнă. Япони командованийĕ Филиппин утравĕсем çине тăтăшах çĕнĕрен пысăк çар чаçĕсем ярса тăрать. Енер Антимонана районĕнче японецсен мотомеханизациллĕ чаçĕсен десанчĕ аннă. Манилăран 60 миля кăнтăр еннерехре, Батангоза çывăхĕнче, Япони транспорчĕсем пуррине асăрханă.

Юлашки кунсенче Америкăпа Филиппин войскисем хăйсенчен йышлă шутланакан Япони çарĕсен вăйлă атакисене сире-сире янă. Çапăçура уйрăмăнах Филиппин войскисен кавалерийĕ хăйне лайăх палăртнă. Америкăпа Филиппин войскисем Антимонана районĕнче ăнăçлă контратакăсем тăваççĕ, ытти районсенче те хыттăн тăрса çапăçаççĕ, çапах та Лусон утравĕ çинчи çапăçу ĕçĕсем Америкăпа Филиппин войскисемшĕн питех те йывăр-ха.

Гонконгра Япони войскисем англичансен гарнизонне хĕçпăшалсăрлатаççĕ. Англин çар министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Гонконг утравĕ ытти çĕрсемпе çыхăнса тăрасси татăлнăран гарнизон валли шыв тата вăрçă хатĕрĕсем илсе тăрасси йывăрланса çитнĕ пирки, унта англичансен парăнмалла пулнă. Çакăнпа пĕрлех Англи гарнизонĕн ĕçĕсене Японин пикирующи бомбардировщикĕсем пырса тапăнни те нумай йывăрлатнă.

Кантонпа Коулун чугунçулĕ тăрăх Китай войскисен операцийĕсем ăнăçлăн пулса пыраççĕ. Япони командованийĕ Няньцзин районне пысăк мар çар чаçĕсем илсе пынă. Фронтăн тепĕр участокĕнче Китай войскисем Японин Гонконг патне пымалли тĕп çулне татнă.

Малайăри вăрçă ĕçĕсенче улшăнусем çук. Икĕ енĕ те войскăсене пуçтарса тăратас ĕçе пикенсе туса пыраççĕ, çавна май вăрçă операцийĕсем кăшт вăйсăрланни палăрать. Кемананран çурçĕр еннелле Керак-Сигун районĕнче патрульсем çапăçнисем пулнă.

Англичансен оборонин çĕнĕ позицийĕ Сингапуртан 300 миля аяккарахра вырнаçса тăрать.

Голланди Индийĕн подводнăй лодки декабрĕн 24-мĕшĕнче çĕрле японецсен пĕр миноносецне торпедăланă та ăна путарнă. Декабрĕн 27-мĕшĕнче Япони самолечĕсем Батавири аэродром çине тата Голланди Индийĕн тĕрлĕрен хулисем çине пысăк ушкăнсемпе пыра-пыра тапăннă. Аэродрома çĕмĕрсе нумай сиенленĕ. Вилнисем тата аманнисем нумай шутланаççĕ. (ТАСС).

Ливири вăрçă

ЛОНДОН, декабрĕн 28-мĕш. (ТАСС). Англин хĕçпăшаллă вăйĕсен Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕн коммюникинче çапла пĕлтернĕ: декабрĕн 27-мĕшĕнче Англи войскисем Аджедаби районĕнче противника татах та хытăрах хĕсме пуçланă. Бенгазипе Аджедаби хушшинчи района пĕтĕмпе пекех противникăн войскисенчен тасатнă. Ку районра противникăн тăрса юлнă уйрăм пĕчĕк отрячĕсене пĕтерсе пыраççĕ. Аджедабирен кăнтăр-хĕвеланăçнерех вырăнта Англи войскисем тăшманăн автотранспортне тата горючи тултарнă цистернисене пĕтерсе тăкнă.

Рейтер агентствин корреспонденчĕ Ливирен çапла пĕлтерет: Германи войскисем халĕ Бенгазирен 160 километр кăнтăр еннерехре, Триполие каякан çул çинче тăраççĕ. Германин Африкăри корпусĕн хӳтлĕхсенче çирĕпленсе ларнă подразделенийĕсем Англи войскисен наступленине май килнĕ таран тытса чарма тăрăшаççĕ; вĕсене халĕ çапăçăва юрăхлă вăй тесе шутлама та çук. Италипе Германин хĕвеланăç еннелле куçарса кайнă авиацийĕ халĕ те, иртнĕ кунсенчи пекех, хăйĕн активлăхне питех палăртмасть. Крит утравĕ çинчи базĕсенчи тата Греци аэродромĕсем çинчи бомбардировщиксемпе пуринчен ытларах Англин коммуникацийĕсем çине бомбăсем пăрахма усă кураççĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 28-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕн коммюники çапла пĕлтерет: тăшманăн пĕр-пĕринчен уйăрălса кайнă çар ушкăнĕсем Барка районĕнче тата Бенгазирен кăнтăр енче çаплах хирĕç тăркалаççĕ-ха, анчах та ун войскисен тĕп вăйĕсем хальхи вăхăтра Аджедабия патнелле чакаççĕ. Аджедабирен çурçĕр енче Англи войскисем кăнтăралла татса тухма тăрăшакан тăшман çарне каялла чакма чараççĕ.

Ку вăхăтра тыткăна лекнисен лагерĕсенче тата госпитальсенче 13.000 нимĕç тата итальянец çынни шутланать. Кусемсĕр пуçне тыткăна лекнисем вăрçă ĕçĕсем пыракан районсенче те нумай, вĕсене тылри районсене куçариччен унта тытса усраççĕ.

Малайăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 28 мĕш. (ТАСС). «Таймс» хаçатăн Сингапурти корреспонденчĕ Çурçĕр-хĕвеланăç Малайăри вăрçă ĕçĕсен районĕсенче пулнă. Кунти вăрçă пĕртте Европăри вăрçă пек мар, тесе кăтартса парать вăл. Паллах ĕнтĕ, Япони çак кампанин планне тахçанах туса хатĕрленĕ кăна мар, вăл тата вырăн условийĕсене кура, çапăçу мелĕсене йĕркелес тĕлĕшпе те питĕ нумай ĕçленĕ. Корреспондент çапла кăтартса парать: Япони салтакĕсем çăмăл хĕçпăшалланнă, кĕске курткăсемпе резина тĕплĕ çăмăл атă-пушмаксем тăхăннă. Джунглисенчи хăшпĕр вырăнсенче японецсем юханшывсем тăрăх вырăнти халăхран тытса илнĕ кимĕсемпе е бамбукран тунă сулăсемпе вырăнтан вырăна куçса çӳреççĕ. Вĕсем хăйсен отрячĕсене ертсе пыракан проводниксем вырăнне Малайăра нумайранпа пурăннă японецсене илеççĕ. Çапăçусем питĕ çывăхра пулса пынă пирки артиллерипе сайра-хутра çеç усă кураççĕ. Малайăри вăрçă фронтĕнчи çапăçусене авиаци те сахал хутшăнать, мĕншĕн тесен кунта пăрахмалли объектсене йывăçсем хупăрласа тăраççĕ.

Путакан—çăланма тăрăшать

Гитлер хăйне хăй, хальхи вăхăтри чи паллă полководец тесе шутлать. Хăшпĕр государствăсене çăмăллăн çĕнтернине кура тата хăйĕн вăрçă таланчĕ çине мăнкăмăллăн шанса, вăл Совет Союзне те часах çĕнтерме ĕмĕтленнĕччĕ. «Çичĕм пек хăвăрт» çĕнтерме юрататать «фюрер» Гитлер.

Анчах тĕнчере тем пăсăлнă пулмалла: фактсем «фюрер» ĕмĕтленнине хирĕç пыма пуçларĕç. Хĕвеланăçĕнче вăрçнă чух ĕçсем ăнăçлă пыратчĕç, хĕвелтухăç енче вăрçă пуçлансан темле инкек кансĕрлеме тытăнчĕ: Гитлер планĕсем пĕрин хыççăн тепри арканса пыраççĕ. Аçтан тухрĕ кун пек инкек? «Фюрер» ниепле те ăнланма пултараймасть. Çитмĕл кунра Совет Союзне çĕнтерсе пăрахасшăнччĕ—пулаймарĕ, нимĕç салтакĕсене Мускаври ăшă хваттерсене вырнаçтарма пулнăччĕ—Мускав нимĕнпе те хăйĕн патне çывхартмасть!.. Нумаях пулмасть, Гитлер çав парăнман Мускав çине генеральнăй наступлени пуçлани çинчен пĕлтернĕччĕ. Анчах нимĕç çарĕсем, малалла каяс вырăнне, мĕнпур хĕçпăшалне пăрахсах каялла сатлаттарса тарассĕ. Ситменни çине—хĕл... Аçтан туха килнĕ вăл? Гитлер хĕлле çапăçма шутламанччĕ!

Шалтах хуйха кайрĕ «фюрер», Кусем-çырĕн шутлать, ку йĕркесĕрлĕхе тĕрлетмелли «эмел» шырать аптăранă Гитлер. Елĕкрех вăл пурне шухăшламасăр [illegible] ывăтарма юратманччĕ, анчах [illegible] та каплах пулсан, ăна халăх [illegible] пăрахать тесе... темрен тем пулма пултарĕ. Мĕнле перçе ӳкерес-ха çак икĕ мулкача харăс?

Татах та хыттăн шутлать «фюрер»... Сасартăк вăл кресло çинчен сиксе тăчĕ. Унăн чунĕ хăйĕн законне тупнă Архимедăнни пекех хавасланса кайрĕ.

— Тупрăм! Тупрăм эмел! Главнокомандующие пĕтĕмĕшпех айăплас, вырăнтан кăларас, вара хам таса пулса юлатăп...

Вăл звонок кнопкине пусрĕ. Çав самантрах Гитлер кабинетне ун çывăх подручнăйĕсем кĕрсе тулчĕç. Гитлер вĕсене усăнса аннă çӳç айĕпе пурне те пăхса тухрĕ.

— Калăр-ха мана: эпĕ аслă полководец пулса тăнине пурте пĕлетĕр-и?

— Пурте пĕлетпĕр, паллах,—тĕрлĕрен сассемпе ответлерĕç лешĕсем.

— Апла пулсан, мĕншĕн пирĕн фронтри ĕçсем начарланса пыраççĕ?.. Эпĕ çавтери тĕрĕс приказсем парса пыратăп вĕт!

Чылайччен никам та шарламасть, унтан Геббельсăн чĕтрекен сасси илтĕнет:

— Мĕншĕн тесен, юратнă фюрер, фронтри генералсем сирĕн пекех талантлă мар-çке... Сирĕн приказсене хăйсене кирлĕ пек ăнланса пурнăçлаймаççĕ...

— Тĕрĕс, шанчăклă тусăм. Аслă çын приказне пурнăçлама аслă çын кирлĕ. Ăнланатăр-и? Çавăнпа та эпĕ паянтан хама главнокомандующи туса хуратăп, Браухича [illegible] кăларатăп.

Чăн сăмах юратнă фюрер, — мухтама тытăнчĕ Гитлер [illegible] тусĕсем.—Тинех пирĕн ĕçсем майла шаççĕ! Хайль Гитлер!

Пурте «фюрера» чысласа ал çупса ячĕç.

Савăнать Гитлер шайкки, хăй çăлăнассине шанать. Вĕсем Крыловăн «Квартет» баснине пĕлсех кайман курăнать; пĕлнĕ пулсан Гитлер шайккин хаваслăхĕ чылай чакĕччĕ. Эпир питех те аван пĕлетпĕр Крылов каласа панă историе. Пĕрре ашак, качака, таки, мартышка тата мăн упа квартет вылямa шут тытнă, тет. Паллах, вĕсен ĕç ниепле те тухайман. Ĕçе тӳрлетес тесе, вĕсем пĕрин вырăнне тепри куçса ларнă, теприн вырăнне виççĕмĕшĕ. Кун пек сиксе ларни те квартета майлаштарайман.

> «Эсир, туссем, темле ларсан та,
> Музăк ăсти пулма юраймăр»

тесе вĕçленет басня.

Эпир пĕлетпĕр: такам вырăнне куçса ларсан та, Гитлер полководец пулса тăрас çук, вăл арканма тапратнă çынçиенсен çарĕпе фронтри ĕçсене тӳрлетме пултараяс çук.

Анчах хавасланаканни Германире Гитлер шайкки çеç (вăл та «фюрер» хушнипе çеç алçупать). Ытти нимĕçсем çакăн пек шутлаççĕ: «Малтан та Гитлер вăрçă ĕçне ертсе пынă, халь те вăл главнокомандующи. Ку пирĕн [illegible] Фронтри ĕçсем малалла та начарланса пырсан, вара кама кăларса хăма вырăнтан кăларас çук-çке! Хăшпĕрисене ку ыйту ответсĕр пек туйăнать.

Пур ответ! Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар фашистсен урнă пуçне кĕтӳне çапса аркатса—Гитлера та, ун шайккине те [illegible]

В. А.

Совет халăхĕ патне янă салам

ССР Союзĕн Лондонри посольствине çакăн пек резолюци ярса панă: «Британири тред-юнионсене, рабочисемпе кооперативлă движенине ертсе пыракан национальнăй ĕçĕн совечĕн пухăвĕ нацистла захватчиксене хирĕç паттăррăн кĕрешекен Совет Союзĕнчи халăхсене хĕрӳллĕн саламлать.

Нацистсем Мускавпа Ленинграда тытса илме хăтланнисем арканса кайни ирĕклĕхе хаклаканнисене пурне те питĕ савăнтарчĕ, гитлеризмпа фашизмăн ирсĕр вăйĕсене çĕнтерес кунсем çывхараççĕ». (ТАСС).

Нимĕçсем Балтика тинĕсĕ таврашĕнчи халăхсене çаратаççĕ

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 28-мĕш. (ТАСС). Нацистсем кăларса тăракан «Дейче цейтунг ин остланд» хаçат пĕр именсе тăмасăр уççăнах Германия Балти тинĕсĕ таврашĕнчи республикăсене çаратни çинчен çырса кăтартать. Хаçатра каланă тăрăх, Тельнан хулинче Германи çарне пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет тунă. Çак комитет «нимĕç салтакĕсене пулăшма» тесе вырăнти халăхăнне укçи-тенкине тата çăмсене туртса илсе пуçтарать. Халăх хушшинче кашăн носки, ăшă кĕпе-йĕм, ăшă тумтир тавраш ĕ пур,—çавсене пурне те ирĕксĕрех туртса илсе каяççĕ. Кунсăр пуçне тата кашни хĕрарăм нимĕç салтакĕсем валли пĕр мăшăртан кая мар носки, перчатка тата ыт. те çыхмалли çинчен уйрăм распоряжени кăларнă. Çаксене çыхмалли çăма хĕрарăмсен хăйсен укçипех илмелле. Çак распоряжение пăхăнман хĕрарăмсене хаяррăн айăплаççĕ.

Нацистсен çав хаçачех тата çакна пĕлтерет: Вальмор хулинчи нимĕç влаçĕсем Германи салтакĕсем патне «парне» япалисем яма хушакан приказ кăларнă. «Парне япалисем» пуçтарас ĕçе салтаксене хăйсенех хушнă. Çак салтаксем хула çыннисен юлашки ăшă кĕпе-йĕмĕсене, перчаткисене, носкисене тата ыт. те туртса илнĕ. Çавăн пекех нацистсем халăхран укçа-тенкĕ те туртса илеççĕ. Германи влаçĕсен çакăн пек ĕçĕсене вырăнти халăх хытă хирĕç тăнине нацистсен хаçачĕн хăйĕн те йышăнма тивет.

Дани халăхĕ гитлеровецсен пусмăрĕ айĕнче

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 27-мĕш. (ТАСС). «Политикен» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Дани писателĕ Антер Киркеди раштав ячĕпе радио тăрăх çапла тухса каланă: «Копенгаген полицийĕ преступленисем, уйрăмах ачасен преступленийĕсем ӳсни çинчен пĕлтерчĕ. Пĕр врач мана: Данире чахоткăллă çынсен хисепĕ ĕмĕрне те хальхи пек пысăк пулман, терĕ. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен çынсем тăраниччен апат çиеймеççĕ. Пирĕн патăмăрта ĕлĕк япăхах мар пурăннисем те халĕ питех те начар пурăнаççĕ. Çак раштав ĕнтĕ манпа тантăш çынсемшĕн чи йывăр раштав пулать. Вăрçă асапĕлăхĕпе пирĕн тăван çĕршыван мĕскĕн кунçулĕ Дани халăхĕн чĕрине йывăррăн пусса тăрать».

Германире квалификациллĕ ĕç вăйĕ çителĕксĕр

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 29-мĕш. (ТАСС). Нацистсен хаçачĕсем Германире квалификациллĕ ĕç вăйĕ çителĕксĕрри çинчен пăшăрханса çырма чарăнмаççĕ-ха. «Дейче альгемейне цейтунг» хаçат çапла пĕлтерет: çитес çывăх çулсенчех Германире квалификациллĕ специалистсем 80.000 çын таран çитми пулать. Германири аслă шкулсенче пуринче те пушă вырăнсем нумай, мĕншĕн тесен арçынсене пурне те фронта мобилизацилесе илсе кайнă. Аслă технически шкулсенче халĕ 14.000 пушă вырăн пур. Çывăх çулсенчех педагогика кадрĕсем 60 процент таран çитми пулассĕ. Квалификациллĕ кадрсем çителĕксĕрри çĕршыври халăх хуçалăхĕнче хытă сисĕнет.

Германипе Итали авиацийĕн Ливири çухатăвĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 27-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: малтанлăха шутласа тухнă тăрăх, ноябрĕн 18-мĕшпе декабрĕн 23-мĕш хушшинче Германипе Италия Ливире 476 самолет сухатнă. Çак вăхăтрах Англин 195 самолет пĕтнĕ.

Греци халăхĕ выçăпа аптăрать

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 28-мĕш. (ТАСС). «Юнайтед пресс» агентствин Бернри (Швецири) корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Грецирен тарса пынă беженецсем Афина хулинче пĕр эрне хушшинче кăна выçăпа 2400 çын таран вилни çинчен каласа панă.

Таин Америкăри посланникĕ Японине хирĕç

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 28-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Таин Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи посланникĕ Прамош хаçат-журналсен представителĕсене: Таи Японине парăнса унпа килĕшрĕ пулин те, эпĕ Таи представителĕх пулса юлатăп, мĕншĕн тесен Таи халăхĕ Таире Япония пуç пулассине хирĕç тăрать, тенĕ. Çакăнпа пĕрлех Прамош хăй Таи правительстви членĕсем Таирен тухса кайса эмиграцире çĕнĕрен правительство тума пултарасса шанни çинчен каланă.

Укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене илеççĕ

КАНАШ. Перекет кассинчи даннăйсем тăрăх декабрĕн 26-мĕш тĕлне районри колхозниксемпе служащисем лотерея билечĕсене пĕтĕмпе 350 пин тенкĕлĕх çыранса илнĕ. Колхозниксемпе ялти служащисем хушшинче лотерея билечĕсене 85 пин тенкĕлĕх сарнă.

Кармами ялсовечĕ тăрăх 2300 тенкĕлĕх, Сухайкасси ялсовечĕ тăрăх 5600 тенкĕлĕх илме çырăннă, укçине тӳлесе татнă. Шăккăл ялсовечĕ тăрăх 4560 тенкĕлĕх сарнă, укçине 2035 тенкĕ пухнă. Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе Кошкин, Игнатьев, Иванов юлташсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Лотерея билечĕсене сарас ĕç «Молния» колхоз членĕсем хушшинче пысăк активлăхпа иртрĕ. Колхозри 11 хуçалăх лотерея билечĕсене 530 тенкĕлĕх илме çырăнчĕç, укçине пĕтĕмпех тӳлесе татрĕç. П. Емельянов, Ф. Иванов колхозниксем лотерея билечĕсене 50-шар тенкĕлĕх илме çырăнса, укçине çийĕнчех тӳлерĕç. Вагонсем юсакан заводри рабочисем, инженерсемпе техниксем, «Первое Мая» промартелĕн коллективĕ тата аш-какай комбиначĕн коллективĕ ĕçукĕçин 15—20 процентĕнчен кая мар лотерея билечĕсене илме çырăнса укçине пĕтĕмпех тӳлесе татрĕç.

Районри хăшпĕр ялсоветсемпе предприятисем лотерея билечĕсене сарас ĕçе питех те сӳрĕк туса пыраççĕ. Янкăлчă ялсовечĕ лотерея билечĕсене сарас тĕлĕшпе ĕç хăй тĕллĕн пуласса кĕтсе ларать. Çавăн пекех Канашри «Швейник» артель те лотерея билечĕсене пачах сарман.

Т. ИВАНОВ.

* * *

ЕТĔРНЕ. Палдайри вăтам шкулта вĕрентекенсемпе вĕренекенсем укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене илме пĕр-пĕринпе ăмăртса çырăнчĕç. Шкул директорĕ Михайлова юлташ лотерея билечĕсене 110 тенкĕлĕх илме çырăнчĕ, учительница Бурашникова 130 тенкĕлĕх çырăнчĕ. Çавăн пекех ытти учительсем те 80—100-шер тенкĕлĕх çырăнчĕç. 8-мĕш класра вĕренекен отличница Роза Ивановăн ашшĕ Хĕрлĕ Çарта, вăл лотерея билетне 10 тенкĕлĕх илме çырăнчĕ. 9-мĕш класра вĕренекен Светлов 30 тенкĕлĕх, Александров, Иванова, Чугунов тата ытти вĕренекенсем 20-шер, 10-шар тенкĕлĕх илме çырăнчĕç.

Г. ВИНОГРАДОВ.

* * *

ÇĔРПӲ. Нĕкĕрвар ялсоветне кĕрекен «Оборона» колхоз членĕсем укçа-тенкĕпе япала лотерейин билечĕсене 1500 тенкĕлĕх илме çырăнчĕç, укçине пĕтĕмпех тӳлесе татнă.

А. СТЕПАНОВ.

Шкулсенче çарпа физкультура ĕçне вĕрентесси

Совет шкулĕнчи çамрăксене тĕрлĕ общеобразовательнăй предметсене вĕрентнипе пĕрлех вĕсен сывлăхне çирĕплетессишĕн те ĕçлемелле. Ку тĕлĕшпе вĕсене çар ĕçĕпе физкультура вăйăйисен хăнăхăвĕсене памалла. Вăтам шкула пĕтернĕ çĕре çамрăксене совет гражданинĕн хисеплĕ тивĕçĕ пулса тăракан çар обязанноçĕсене вĕрентсе çитермелле.

Аслă отечественнăй вăрçăн условийĕсенче шкулта çарпа физкультура ĕçĕсем уйрăмах паллă вырăн йышăнса тăма тивĕçлĕ. Малта пыракан шкулсемпе учительсем, çакна тĕплĕн ăнланса илсе, çарпа физкультура ĕçĕсене ăнăçлăн туса пыраççĕ. Калайкассинчи (Сĕнтĕр р.) туллимар вăтам шкулта физкультурăна вĕрентессине çĕнĕлле йĕркелесе янă. Физкультура урокĕсене кунта кирек епле çанталăкра та, класра мар, ирĕкре ирттерессĕ. Стройпа çӳреме хăнăхтарасси шкул çумĕнчи плац çинче пулса иртет. Физкультура учителĕ Макаров юлташ çулталăклăх вĕрентӳ планĕ туса хатĕрленĕ, вăл уроксене план тăрăх ирттерет, вĕренекенсене физкультура хăнăхăвĕсемпе пĕрлех çар ĕçĕн пуçламĕш пĕлĕвĕсене парса пырать. V, VI, VII-мĕш классенче вĕренекенсем пурте БГТО нормисене çак уйрăмсемпе панă: Совет Союзĕнчи физкультура движенийĕ, 60 метр тата 100 метр хушши чупасси, гимнастика, акробатика, арçын ачасем 1000 метр, хĕрачасем 500 метр хушши чупасси. Хальхи вăхăтра вĕренекенсем йĕлтĕрпе чупассин, граната ывăтассин нормисене пама хатĕрленсе пыраççĕ. Кунта VI-мĕшпе VII-мĕш классенче вĕренекенсем пурте ПВХО тата ГСО значкисчĕсем шутланаççĕ. VII-мĕш класра вĕренекенсем пăшала тыткалама вĕренеççĕ, пăшал макечĕсене хатĕрлеççĕ. V — VII-мĕш классенче вĕренекенсем противогазсем тăхăнса çуран поход туса ирттернĕ.

Ишекри (Ишлей р.) вăтам шкулта та физкультурăна вĕрентес ĕçе тивĕçлипе йĕркеленĕ. Шкулăн гимнастика тумалли городок тата физкультура залĕ пур, çарпа физкультура ĕçне вĕренмелли тĕрлĕ хатĕрсемпе пособисем çителĕклĕ, 60 мăшăр йĕлтĕр пур. Хальхи вăхăтра физкультура урокĕсем нимрен ытла ачасене йĕлтĕрпе чупма хăнăхтарас майпа пулса иртеççĕ. Вĕренекенсене йĕлтĕрпе тĕрлĕ вырăнта тĕрлĕ мелпе çӳреме хăнăхтараççĕ. Аслă классенче вĕренекенсене винтовка тата груз йăттарса йĕлтĕр похочĕсем ирттерессĕ. Шкулта стрелковăй кружок ĕçлет, вĕренекенсем винтовкăпа, гранатăсемпе палламаççĕ, тĕл пеме вĕренме хăнăхаççĕ.

Çар ĕçне вĕрентессипе Акулевăри (Шупашкар р.) вăтам шкул учителĕ М. Петров тимлĕн ĕçлет. Вăл çар ĕçĕн программине вăхăтра пурнăçласа пырать, вĕрентӳ ĕçне практикăпа таччăн çыхăнтарать. Вĕренӳ ĕçне кунта нимрен ытла ирĕкре (угамра е хирте) ирттерессĕ. 9-мĕшпе 10-мĕш классенче тĕрлĕ практикăллă темăсемпе занятисене хире тухса ирттернĕ. Кунта чăрмавлă вырăнсем тăрăх çуран поход тăвассине, утлă çар сасартăк тапăнсан епле хирĕç тăрассине тата ыттине те вĕрентеççĕ. Вĕренекенсем противогазпа усă курма лайăх вĕренсе çитнĕ, аманнисене пирвайхи пулăшу пама, перебежкăсем тума, хырăмпа шуса кайма пĕлеççĕ. Вĕренекенсем пурте ПВХО нормисене парса пĕтернĕ. 8, 9, 10-мĕш классенче вĕренекенсем БГТО тата ГТО нормисене панă.

Çар ĕçĕн урокĕсене Урпашри (Сĕнтĕр р.) вăтам шкул учителĕ Пегасов юлташ тĕплĕн йĕркелесе ирттерет. Уроксен планĕнче вăл каласу содержанине, тĕллевне, материала памалли метода, кирлĕ пособисене тата киле памалли заданисене палăртать; каласусем вĕренекенсенчен ыйтнипе тата практикăллă ĕçсемпе черетленсе пыраççĕ.

Анчах чылай шкулсенче çарпа физкультура ĕçне вĕрентес ĕçре çитменлĕхсем те сахал мар-ха. Çар ĕçĕн урокĕсем час-часах вĕренекенсен класс тулашĕнчи ĕçĕсемпе çыхăнса пымаççĕ. Класс тулашĕнчи оборона ĕçĕсене çар ĕçĕн программине тĕплĕнрех вĕренес тĕллевпе организацилемеллине пур çĕрте те ăнланса илеймен-ха. Хире тухассине, походсем тăвассине, çар вăййисем, çарпа физкультура ăмăртăвĕсем ирттерессине чылай шкулсенче пуçласа та яман. Сăмахран, Урпашри вăтам шкулта вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпа та пĕр çуран поход анчах туса ирттернĕ; стрелковăй кружок ĕçлемест. Хальхи вăхăтра вăтам шкулсен аслă класĕсенче всевобучăн 110 сехетлĕ программине вĕренеççĕ. Анчах хăшпĕр шкулсенче военруксем çук, хăшпĕр шкулсенче кирлĕ пособисем çителĕклĕ мар, кирлĕ оборудованине туса çитермен. Сĕнтĕр районĕнчи пилĕк вăтам шкултан пĕр шкулăн анчах стрелковăй тир пур. Шкулсенче йĕлтĕрсем пачах çителĕксĕр. Йĕлтĕрсене вĕренекенсен хăйсен вăйĕпех туса хатĕрлес ĕçе кунта тивĕçлипе пуçăнман та халĕ.

Шкул руководителĕсем çарпа физкультура вĕренĕвне çителĕксĕр ертсе пыраççĕ. Урпашри вăтам шкул директорĕ Зинькова юлташ вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпа çар ĕçĕн урокĕсене пачах та итлемен. Çавăн пекех Байгеевăри (Çĕрпӳ р.) вăтам шкул директорĕ Ильин юлташ та çар ĕçĕн пĕр урокне те итлемен, çавăнпа вăл çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе учителе нимĕнле кăтарту та пама пултарайман.

Шкулсенче çарпа физкультура ĕçне вĕрентессине çине тăрсах вăйлатмалла. Çутĕç органĕсен, шкул директорĕсен ку ĕçе тĕрĕслесе ертсе пымалла. Çарпа физкультура ĕçне вĕрентекенсене тăтăшах пуха-пуха семинарсем туса ирттермелле, вĕсен, çарпа физкультура урокĕсене епле ирттернине тĕрĕслесе, ку тĕлĕшпе вĕрентекенсене кирлĕ кăтартусем памалла.

А. ОТАЧКИН.

Военнообязаннăйсене регистрацилес ĕçе йĕркеллĕ ирттерер

Оборона Халăх Комиссарĕн заместителĕ пĕрремĕш рангри çар комиссарĕ Щаденко юлташăн директивне пурнăçласа, Шупашкар хулин çарĕç комиссариачĕ 1941 çулти декабрĕн 29-мĕшпе 1942 ç. январĕн 10-мĕшĕ хушшинче военнообязаннăйсене тепĕр хут регистрацилессине туса ирттерет.

Запасри военнообязаннăйсене тепĕр хут регистрацилесе тухасси государство оборонине тĕреклетессинче пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăрать. Çак ĕçĕн тĕп задачи—военнообязаннăйсене учетра тытса тăрас ĕçе тĕрĕслесси тата ку ĕçре çирĕп йĕрке тăвасси пулса тăрать. Командăй составăн тата рядовой составăн запасĕнче тăракан военнообязаннăйсен—1921 çулта çуралнисенчен пуçласа 1892-мĕш çулта çуралнисем таран—пурин те тата çар призывне кĕрекен 1922 çулта çуралнă çамрăксем, отсрочка илнипе пурăнакан маларах çулсенче çуралнă çынсем тата вăтам е аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă 1923 çулта çуралнă çамрăксем пурте регистраци витĕр тухмалла.

Шупашкар хулин çарĕç комиссариачĕ регистраци туса ирттерекен пунктсене хатĕрлерĕ, регистраци витĕр тухма тивĕçлĕ çынсен списокĕсене пăхса тухрĕ тата регистраци пункчĕсен начальникĕсене çирĕплетрĕ.

Çак ĕçе туса ирттерме партин пуçламĕш организацийĕсем хулари çарĕç комиссариатне мĕнчухлĕ лайăхрах пулăшаççĕ, çавăн чухлĕ ĕç ăнăçлăрах пулса иртĕ. Регистраци тăвакан пунктсенче ĕçлеме политруксем, çавăн пекех докладчиксемпе бесседчиксене те уйăрнă.

Предприятисемпе учрежденисен руководителĕсен тата хулари пĕтĕм активăн военнообязаннăйсене тепĕр хут регистрацилесе тухма хулари çарĕç комиссариатне пулăшмалла. Регистраци пунктне кая юлса пыни тата пымасăр пăрăнса çӳрени пĕртте пулмалла мар. Ку тĕлĕшпе айăплисене вăрçă вăхăтĕнчи çар законĕсем тăрăх ответ тыттараççĕ.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн бюровĕ партин пуçламĕш организацийĕсен секретарĕсене военнообязаннăйсене регистрацилес ыйтупа массăллă ăнлантарулăх ĕçе анлăн туса пыма хушрĕ.

Регистраци тăвакан пунктсенчи политруксен военнообязаннăйсене çар дисциплини çинчен, çар присяги çинчен ăнлантарса парас пулать. Парти организацийĕсен военнообязаннăйсене çирĕп дисциплинăллă пулма, тăван çĕршыва чĕререн парăнса тăма воспитани парас пулать.

Г. АЛЕКСЕЕВ.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн çарĕç пайĕн заведующийĕ.

Государствăна пахча-çимĕç тата аш-какай параççĕ

СЕНТĔРВĂРРИ. Хатĕрлев пункчĕсене кашни кунах колхозсенчен пахча-çимĕç тата аш-какай тиенĕ лавсем пыраççĕ. Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз çак кунсенче планран ирттерсе государствăна 468 килограмм пахча-çимĕç пачĕ. «Новая деревня» колхоз 26 пăт аш-какай, «Коминтерн» колхоз 32 пăт аш-какай тата 695 пăт çĕрулми, «Пищевик» колхоз 13 пăт аш-какай тата 50 пăт тырă леçсе пачĕ.

А. МАКАШ.

Тӳрлетни

«Чăваш Коммуни» хаçатăн декабрĕн 29-мĕшĕнчи номерĕнче тухнă «Вырăнти советсен вăрçă вăхăтĕнчи задачисем» ятлă статьян юлашки предложенине çапла тӳрлетсе вуламалла: «Пĕтĕм вăя, пултарулăха партипе правительство постановленийĕсене хăвăрт пурнăçлама çĕре хурса, тăшмана çĕнтерме Хĕрлĕ Çара пулăшса пырас пулать».

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23 «Ленин çулĕ» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 7457 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 651. Ф 6. 58 84 п. л.